Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа – 64 çул

Ветеранпа тĕл пулчĕç

Москакасси шкулĕнче вĕренекенсем Аслă Çĕнтерӳ уявĕ тĕлĕнче Аслă Отечественнăй вăрçăн пур ветеранĕсем паттĕнче те пулма тăрăшрĕç. Вĕсем патĕнче пулнă май вĕтерансен пурнăç условийĕсемпе интересленчĕç, май килнĕ таран пулăшма тăрăшрĕç. Акă 8-мĕш класра вĕренекенсем В.А. Савельев вăрçă ветеранĕ патне çитсе килчĕç.

Василий Антонович Савельев 1925 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче Уйкас Хачăк ялĕнче çуралнă. Ытти ачасемпе пĕрле Василий те шкула çӳреме пуçланă. Унта 4 класс пĕтерсен Москакасси шкулĕнче тепĕр виçĕ çул вĕреннĕ.

1943 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче ăна çара илеççĕ. Василий Антонович Японии чиккине, запасри 112-мĕш стрелковăй полкăн пулеметчиксен батальонĕн 218-мĕш уйрăмне

лекет. Малтан стрелок, 1943 çулхи апрель уйăхĕччен пуçласа 1945 çулхи август уйăхĕччен кабель линийĕн телефонисчĕн ĕçĕсене туса пырать. Унта вĕсен 7-8 точка пулнă. 1945 çулхи августăн 8-9-мĕш кунĕсенче вĕсем Япони чикки урлă каçнă. Çĕрĕн-кунĕн хĕрӳ çапăçусем пуçланаççĕ. Çав кунсенче Василий Антонович ĭывăр аманать. Тăшман пуллăн унăн кăкăр шăмми витĕрех шăтарать, тепĕр снаряд ванчăкĕ те ăна ĭывăр суранлатать. Çапăçу хирĕнчен ăна тăваттăн йăтса тухнă. «Пульăсем çумăр çунă пекех вĕçеççĕ. Мана кунта ан хăварăр. Яппун самурайĕсем чĕррĕн хăварас çук»,– терĕм çĕклесе тухакансене.– Вара мана Ворошилов хулин Восточнăй районне ăсатрĕç», - аса илет ветеран вăрçă çулĕсене. Василий Антонович сурансенчен 2928-мĕш эвакогоспитальте юсанать. Ун хыççăн 1945 çулхи октябрьтен пуçласа 1946 çулхи июньччен автополкăн 54-мĕш уйрăмĕнче шофера вĕренет. Çав çултан пуçласа 1948 çулхи февраль уйăхĕччен стрелковăй çарăн батальонĕнче стрелок пулса службăна малалла тăсать.

Вăрçă çулĕсем çинчен каласнă май вăл вăхăтри нушасем тепĕр хут куç умне тухса Василий Антоновичăн чĕрине ыраттараççĕ: «Салтакра урана тăхăнмалли те çукчĕ. Вăрмана кайса çăпата тумалли хатĕрсем илсе килсе çăпата сыраттăмăрччĕ. Каярахпа Америка ботинкисене пама пусларĕç хăть. Хĕрлĕ тĕслĕччĕ.

Нимĕçсене çĕнтернĕ тесен, эх савăнса кайрăмăр, пилоткăсене тӳпене ывăта-ывăта «урра!» кăшкăратпăр... Яппун самурайĕсене хăваласа ярсан, вĕсен окопне кĕтĕмĕр те тĕлĕнсе кайрăмăр, хуран тăп тулли апат ларать. Апат çиме те вăхăт пулман иккен японецсен, тарнă. Кайран вара салтаксем тем тунă вал апатпа, пĕлейместĕп... Гоби пушхирĕнче питĕ шăрăхчĕ, икшер-виçшер кун пĕр тумлам шыв ĕçейменни те пулнă... Эпĕ вара нумай çапăçаймарăм, часах амантрĕç».

Вĕри чей ĕçнĕ май ачасем тимлĕн итлерĕç ветерана. Кунпа пĕрлех вĕсем ватă çынна кил-тĕрĕшри, пахчари ĕçсене пурнăçлама, тирпейлеме пулăшрĕç.

О. ТАРАСОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: шкул ачисем ветеран патĕнче.

Майăн 15-мĕшĕнче – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ

Çичĕ ача пăхса ӳстернĕ

Николай Артамонович Кузнецов 1924 çулта Мăн Токшик ялĕнче çуралнă. Çемйи йышлă пулнă – 4 ывăл. Николай вара чи асли пулнă майĕпе ытларах тивĕç ун çине тиеннĕ.

Шкулта вăл аван ĕлкĕрсе пынă. Апла пулин те 7 класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн малалла вĕренме кайма май килмен. Мĕншĕн тесен вĕреннĕшĕн укçа тӳлемелле пулнă. Вăл трактористсен курсне вĕренме кайнă.

1943 çулхи августăн 23-мĕшĕнче ăна çара илеççĕ, танкистсен шкулĕн механик-водительсен курсне вĕренме яраççĕ. 1943 çулта Т-34 танк водителĕ пулса çапăçусене хутшăнма тытăнать. Вăрçă хирĕнче аманса икĕ хутчен госпитале лекнĕ. 1944 çулта контузи те пулнă. Вăрçари хастарлăхшăн чылай медальсемпе орденсене тивĕçнĕ.

Вăрçă хыççăн Муркашри МТС-ра трактористра ĕçлеме тытăннă, çур аки, кĕр аки ĕçĕсене хутшăннă. Николай ялти пĕрремĕш каччă пулнă темелле. Вăл купăспа та ăста каланă. Туйсем унсăр иртмен темелле. Ун çине пăхакан хĕрсем те сахал пулман. Вăл вара Муркашри Анастасия Скворцовапа çемье тĕвĕлет. Çамрăк та чипер хĕр пулнă вăл. Вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенчех ашшĕ фронтра çĕре кĕнĕ унăн.

Çапла вара Мăн Токшик ялĕнчи яшпа Муркаш хĕрĕ пĕрлехи пурнăçа пуçлаççĕ. Пурăнмалли вырăн шыраса вĕсем Хорнуй ялне çитеççĕ, ватă çынсене пăхса пурăнмалла калаçса татăлаççĕ. Кайрантарах вĕсем Чаканар урамĕнче, уй хĕрринче, пĕчĕк çурт туянаççĕ. Пӳртре кăмака, сĕтел, тенкел, çывăрмалли вырăн кăна пулнă, утса çӳреме вырăн та юлман.

1952 çулта вĕсен пĕрремĕш ача – хĕр çуралать. Римма ят параççĕ ăна. Ача пăхса ларайман вара ун чухне амăшĕсем, ĕçлемелле пулнă. Пĕрремĕш ачи чирленĕ хыççăн ĕмĕрлĕхех куçне хупать.

Тăватă çултан Александр çуралать. Ку вăхăта Кольăпа Настя ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе кивĕ пӳрт пури илсе пурăнмалли çурта аслăлатаççĕ. Николай «Знамя труда» колхозра тракторпа ĕçлет, Настя колхоз лашисене пăхать.

Александр 10 класс пĕтернĕ хыççăн Советскинче тракторист удостоверенине илчĕ. Çартан таврăнсан тăван хуçалăхра «хурçă утпа» ĕçлеме тытăнчĕ. 1980-мĕш çулсенче Людмила Ивановапа çемье çавăрчĕ, Муркашра пурăнма тытăнчĕç. Техникăпа сусăраннă хыççăн бухгалтера вĕренсе тухрĕ, Е. Андреев яч. хис. колхозра бухгалтерта ĕçлерĕ. Хĕрĕ ашшĕ çулĕпе кайрĕ, халĕ ĕнтĕ ĕçлет.

Аастасияпа Николай Кузнецовсен çемйинче кашни виçĕ çулта пĕрер пепке хушăнса пырать. Çемье пысăкланать. Ачасем шкула çӳреме тытăнаççĕ, ашшĕ-амăшне пулăшаççĕ.

Анчах йыш хушăнса пынă май пӳрт каллех пĕчĕкленсе юлать. 1970-мĕш çулсенче Николай Артамонович Атăл леш енне вĕрман ĕçлеме каять. Анчах инкеке пула унта урине хуçать. «Çавăн чухне кăна канса куртăм»,– тетчĕ Николай Арамонович кĕçĕн ывăлне сăпкара сиктернĕ май.

1972 çулта Кузнецовсен çемйи пилĕк стеналлă пысăк çурта пурăнма куçать. Ĕçлеме вара çемьери пур йыш та хутшăнать. Аслисем хĕр ачасем пулсан та, алла пуртă, мăлатук, пăчкă тытаççĕ.

Иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш ачисем (хĕрĕсем) ашшĕ çулĕпе кайрĕç. Иккĕмĕшĕ Валентина 1980 çулта трактористе вĕренсе тухрĕ, 16 çул тракторпа ĕçлерĕ. Упăшкипе Валерий Смирновпа иккĕшĕ те Ленин яч. хис. колхозра тракторпа ĕçлеççĕ. Çемьере икĕ хĕр.

Виççĕмĕшĕ Октябрина ача чухнех ашшĕн тракторĕн кабиниччен тухма пĕлмен. 19 çулта тракторист удостоверенине илнĕренпех трактор рульне алăран яман. Валерий Степанов водительпе çемье çавăрчĕç. Халĕ вĕсен мăнук та пур ĕнтĕ.

Тăваттăмĕшĕ Роза та поварта ĕçленĕ хушăрах тракториста вĕренсе тухрĕ. Ленин яч. хис. колхозра та ĕçлерĕ. Сергей Ванюшкин трактористпа пĕрлешсе çемье çавăрнă хыççăн Чулхула облаçне тухса кайрĕç. Халĕ унта упăшки трактористра, хăй вара дояркăра вăй хураççĕ. Икĕ ывăлпа пĕр хĕре пурнăç çулĕ çине кăларнă.

Пиллĕкмĕш ачи Светлана Ленин яч. хис. колхозрах юлнă. Çулталăк хушши Хорнуй ял библиотекинче ĕçленĕ. Унтан вара 20 çул колхоз уй-хирĕнче, фермисенче тăрăшнă. 1986 çулта Александр Матвеевпа çемье çавăрнă. Виçĕ ывăл пăхса ӳстереççĕ. Шел пулин те, мăшăрĕ вăхăтсăр çĕре кĕрет. Халĕ вăл – Платкассинчи клуб заведующийĕ.

Улттăмĕш ачи – Алексей ывăлĕ тракторист-водитель правине алла илнĕ. Ленин яч. хис. колхозра тракторпа ĕçлет. Вăл Татьяна Харьковапа пĕрлешсе çемье çавăрнă, çемьере икĕ ывăлпа пĕр хĕр. Ачисем Муркаш шкулĕнче пĕлӳ пухаççĕ.

Çиччĕмĕш ачи те, кĕçĕнни – хĕр. Людмила вăл. 1996 çулта Хорнуй каччипе çемье çавăрчĕ, уйрăлса тухрĕç, пысăк çурт лартрĕç. Вĕсен халĕ виçĕ хĕр.

Чăн та, Кузнецовсен çемйине çĕр ĕçченĕсен çемйи темелле. Шел пулин те, çемье пуçĕ Н.А. Кузнецов 2003 çулта пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Унăн ĕçне-хĕлне вара унăн 7 ачи, 17 мăнукĕ тата 2 прамăнукĕ тăсаççĕ.

С. МАТВЕЕВА.

Пултарулăх ĕçченĕсем

Ял çинче çутаттăр «çĕнĕ çăлтăр»

Пирĕн тăрăхра «çĕнĕ çăлтăр» çурални çинчен хамăр районта кăна мар, пĕтĕм Чăваш Республикинче те пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çак çын вăл – Ю.И. Ковалев.

Нумаях пулмасть Атапайĕнчи вĕрентӳпе культура центрĕнче Ю.И. Ковалевăн «Асамлă вырăнсем» кĕнекин презентацийĕ иртрĕ. Çав ятпа саламлама паллă çынсем чылай пуçтарăнчĕç. Вĕсен шутĕнче паллă композиторсем, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем Ю.Н. Жуков, В. Романов, А. Макаров, В. Ильдяков, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева, «Росгосстрах» пуçлăхĕ В.И. Вязов, республика радивещанийĕнче ĕçлекен В.Е. Егоров, Атапай шкулĕнчи попечительсен канашĕн членĕ П.Н. Вязов т. ыт. те.

Ку кĕнеке авторăн пĕрремĕш пулчĕ. Уява пынă хăнасем Ю.И. Ковалева татах та нумай кĕнеке пичетлесе кăларма ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Е. Андреева унăн ятне «Муркаш районĕн çыравçисемпе таврапĕлӳçисем» библиграфи указательне кĕртесси çинчен пĕлтерчĕ.

Л. МАКСИМОВА,
Атапай ялĕнчи библиотека заведующийĕ.

Аслă Çĕнтерӳ уявĕ

Тавах сана, çĕнтерӳçĕ-салтак!

Çĕнтерӳ кунĕ – савăнăçлă та хурлăхлă кун. 64 çул ĕнтĕ мирлĕ пурнăçпа пурăнатпăр. Уншăн вара мĕн чухлĕ совет çынни юн тăкнă, хăйсен пурăçне шеллемен.

Вăрçă ветеранĕсен хисепĕ çулран-çул чаксах пырать. Акă Катькас тăрăхĕнчен вăрçă хирне 864 çын тухса кайнă, 439-ăн каялла таврăнайман.

Çулсеренех вăрçă ветеранĕсене чысласси Шатракасси – Катькас – Калайкасси – Шомик – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики маршрутпа пулса пырать. Кăçал та çаплах пулчĕ. Хисеплĕ ветерансене уяв ячĕпе ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Г. Лебедев, ветерансен канашĕн председателĕ О.В. Тямина, шкул директорĕсем, библиотекарьсем саламларĕç. Шкулсенче вĕренекенсемпе ача садне çӳрекенсем вара уяв концерчĕ парнелерĕç.

Ял тăрăхĕнче тĕрлĕ мероприятисем ирттернĕ чухне чăх-чĕп фабрикин директорĕ Н.Г. Ванеркин нумай пулăшать. Акă Çĕнтерӳ кунне е Ватă çынсен кунне паллă тунă чухне те уяв сĕтелне столовăйра хатĕрлеме май парать. Кунти поварсем ватăсене тутлă апат-çимĕçпе хăналаççĕ. Ватăсене яланах ăшă кăмăлпа кĕтсе илнишĕн, Н.Г. Ванеркина, поварсене питĕ пысăк тав. Пурне те сире ăнăçу пултăр.

А. УГАРОВА,
Катькасри библиотека ертӳçи.

Сăн ӳкерчĕкре: Н.Г. Ванеркинăн ветерансем валли ăшă сăмах яланах тупăнать.

Паянхи кун ыйтăвĕсемпе

Хамăра хамăр хисеплеме вĕренесчĕ

Кашни çыннăн пурнăç вăл пĕрре килет. Çамрăк чухне, чăнах та, этем питĕ нумай пурăнассăн туйăнать. Çавăнпах ĕнтĕ çамрăксенчен ытларахăшĕ нумай вăхăта усăсăр ирттерет. Анчах та ĕмĕр темĕн пек вăрăм пулсан та, çулĕсем вара питĕ хăвăрт иртсе çухалаççĕ. Çын та хăй сисмесĕрех ватăлать.

Çав кĕске ĕмĕре пурăнса кашни çын çĕр çинче мĕнле йĕр хăварать-ха? Паллах, кам мĕнле. Пĕри ĕмĕрне хăйĕншĕн кăна пурăнса ирттерет. Кун пек этемĕн ни ачипăчи, ни мăшăрĕ, ни ырă ĕçĕсем... çук. Тепри вара ĕмĕр тăршшĕпе хăйĕн хыççăн ырă йĕр хăварас тесе кил-çурт çавăрса ача-пăча ӳстерет, халăхшăн тăрăшса нумай ырă ĕçсем тăвать. Вĕсем вара пурте çут çанталăк ырлăх-пурлăхĕпе пĕр пекех усă кураççĕ: çиеççĕ, ĕçеççĕ, сывлаççĕ...

Масар çинче те кайран юнашарах выртаççĕ. «Леш тĕнчере» пурте пĕр тан тенĕ вĕт-ха. Ку тĕрĕссипех çапла пулĕ ĕнтĕ.

Анчах мĕнле асра пурăнаççĕ-ха пирĕнтен уйрăлса кайнă, пире лайăхрах пурăнччăр тесе хăй вăхăтĕнче тăрăшса тертленнĕ, пире çут тĕнче парнеленĕ çынсем? Ют çĕршывсенче пулса курнă май тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕн. Мĕнлерех вĕсен масарĕсем! Темиçе çĕр çул каяллах вилнĕ хурăнташĕсене чысласа вĕсен вил тăприсене куç пек пăхса усраççĕ. Масарĕсем çинче те тасалăхпа тирпейлĕх хуçаланать.

Пирĕн вара мĕн кăна çук пулĕ масарсем çинче. Эрех кĕленчинчен пуçласа кивелсе кайнă чечек кăшălĕсем таранах купаланса выртаççĕ. Нумайăшĕн вил тăпри çинче çум курăк алхасать. Мĕнле-ха эпир хамăршăн хаклă пулнă çывăх çынсене çав териех час манса каятпăр? Иртнине манакан лайăх пуласлăх кураймĕ тенине те асра тытмастпăр вĕт-ха.

Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ район больницине хирĕç масар пур. Çак масар çине 1935 çулччен вилнĕ çынсене пытарнă. Паян пурăнакан çынсен нумайăшĕн çак масар çинче кукамăшĕсемпе кукашшĕсем, асламăшĕсемпе аслашшĕсем выртаççĕ. Хăшĕсен вара ашшĕ-амăшĕсем те пур. Чылай çул хушши çак лаптăкпа Мăн Сĕнтĕр райповĕн хатĕрлев кантурĕ усă курса пурăнчĕ. 1990-мĕш çулсенче вĕсем ку çĕре ял администрацине пачĕç.

Мĕн куратпăр-ха эпир халĕ кунта? Çак кивĕ масар çинче кунсерен выльăхчĕрлĕх çӳрет. Нимĕнле картиш таврашĕ те çук. Хамăрăн çывăх çынсен вил тăприсене выльăхсен каяшĕсемпе вараласçĕ.

Çак киревсĕрлĕх пирки тĕрлĕрен пуçлăхсемпе те каласса пăхма тӳр килчĕ. Анчах та усси пулмарĕ. Саккун тăрăх масар хупăнни 70 çула яхăн çитнĕ пулсан унта темĕн тума та юрать имĕш. Епле-ха çав териех пирĕн астăвăм кĕске? Масар çине пытарнă çынсем пирĕн пекех, эпир пурăнакан кил-çуртрах пурăннă вĕт-ха! Вĕсен аллисем тунă ялаласем кашни килтех халĕ те пур пулĕ-ха. Вĕсем пирĕн пекех ачаран ӳссе çемьеллĕ пулнă, ача-пăча ӳстернĕ, ĕçленĕ, пурăннă...

Мĕн кĕтет-ха çак ыйтăва татса паман пуçлăхсене хăйсене? «Иртнисĕр пуласлăх çук»,– тенĕ халăхра. Халĕ вара, чысне кура, паллă çын вилсен еплерах чаплă пытараççĕ. Эпĕ вара маларах вилнĕ çынсемпе хальхи вăхăтра пирĕнтен уйрăлса каякансем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та курмастăп. Пурте вĕсем çынсемех. Çавăнпа та çак кивĕ масар çинче те йĕркеллĕ çынсем выльăхсене çӳретме чарасшăн. Ку лаптăкра вăрман тăрăхĕ лартса ӳстерсен аван пулмалла. Çак тĕслĕхпе эпир пулас ăрăва та хăйсенчен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă çывăх çыннисене чыслама, вĕсен умĕнче пуç тайма вĕрентнĕ пулăттăмăр.

П. ВОРОБЬЕВ,
депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.

Çатракассинчи шкул ачисен пултарулăхĕ

Манăн хреснатте

Пурăнмашкăн пит аван
Хреснаçу пĕрле пулсан.
Ирĕн-каçăн тăрмашать,
Ăс парса та пулăшать.
Унăн ĕçĕ çăмăл мар –
МЧС-ра вăй хурать.
Пирĕн Муркаш районне
Пушарсенчен вăл сыхлать.
Акă килеç ун патне
Часрах пушара тесе.
Кам та пулин пушарта –
Халех çăлса тухмалла.
Ĕçне тĕплĕн вăл тăвать,
Ыттисенчен те ыйтатаь.
Çавăнпа хреснаттене
Пачĕç ертӳçĕн ятне.

Марина БЕЛОВА,
7-мĕш класра вĕренекен.

Пушарнăйсем

Кирек мĕнле çанталăк –
Çула ун тухмалла.
Шутра кашни саманчĕ
Пушарнăйшăн ялан.
Нумай вăл куçа-куçăн
Вилĕмпеле тăрать.
Апла пулин те харсăр,
Хăйĕн ĕçне тăвать.

Софья НИКИТИНА,
3-мĕш класра вĕренекен.